

*В очерке чувашской молодежной газеты рассказывается о творческой деятельности **Валентины Никитиной**, выпускницы факультета журналистики Чувашского государственного университета имени И.Н. Ульянова 2006 года в «Амедиа» – одной из крупнейших кинокомпаний России, производящей художественные фильмы, телесериалы, телепрограммы (г. Москва).*

Кино ўкересси мĕнрен пуçланать? Сериалти сăнара калăпламашкăн мĕн тумалла? Çăлтăрсемпе туслашмашкăн йывăр-и? Кино производствинче тар тăкакан **Валентина Никитина** вăрт тăнлăх чатăрне çĕклерĕ.

**Тĕллев – Мускав**

Канаш районӗнче ҫуралса ӳснӗ хӗр 2001 ҫулта И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧПУн журналистика факультетне вӗренме кӗнӗ. Студент ҫулӗсенчех Валентина Мускава ҫитме тӗллев лартнӑ. Виҫҫӗмӗш курсра пӗлӳ пухаканскер ӗмӗтне пурнӑҫланӑ. Хӗр тусӗпе Пӗрремӗш телеканалра тухса тӑракан «Жди меня» кӑларӑмра пултарулӑх практикинче пулнӑ. «Ҫырусем миххи-миххипе ҫитетчӗҫ. Вӗсене вуласа тухаттӑмӑр, базӑна кӗртеттӗмӗр. Тен, ҫыру шӑрҫалакана шыракан пур? Чӑнах та, ҫакнашкаллисем тупӑнатчӗҫ. Йывӑр, кӑсӑклӑ шӑпаллисене уйрӑм тытаттӑмӑр», — аса илчӗ Валя.

Чӑваш хӗрӗ Мускава тӳрех килӗштернӗ. Ҫӗршывӑмӑрӑн тӗп хули аталанмалли майсемпе илӗртнӗ. Ҫавӑнпах журналист алла диплом илсен ниҫта та мар, Мускава ӑнтӑлнӑ. Пӗр вӑхӑт «Автопроводник» журналта вӑйне тӗрӗсленӗскер «Амедиа» кинокомпание ӗҫлеме вырнаҫнӑ. Раҫҫейри чи пысӑк пӗрлешӳсенчен пӗри телесериалсемпе телефильмсем, телепрограммӑсем ӳкерет. Унӑн павильонӗсенче драмӑсемпе детективсем, триллерсемпе романтикӑллӑ комедисем, ситкомсем ҫуралаҫҫӗ. 40 пин тӑваткал метрлӑ лаптӑк йышӑнакан студи комплексӗнче 16 павильон вырнаҫнӑ. Компани ют ҫыршывсемпе те ӗҫлет. Пухмачра — «Бедная Настя», «Моя прекрасная няня», «Не родись красивой», «Татьянин день», «Закрытая школа» тата ытти паллӑ теленовеллӑсем. Пирӗн ҫӗршывра Голливуд студийӗпе пуҫарса ӳкернӗ проект та «Амедиа» павильонӗсенче ҫуралнӑ. «Кино ӳкерес ӗҫ сценарирен пуҫланать. Вӑл кураканшӑн интереслӗ, хӑйне евӗр пултӑр. Экран умӗнче ларакан суяна, ӳстерсе кӑтартнине тӳрех тавҫӑрать. Актерсене палӑртасси те яваплӑ. Ятарласа кастинг йӗркелеҫҫӗ. Комиссире — кастинг директорӗ, оператор тата режиссер. Рольсенче кам выляссине палӑртсан проектӑн «пилотне» ӳкереҫҫӗ. Ӑна телеканалсене кӑтартаҫҫӗ, сутаҫҫӗ. Проекта ырлакан малалла ӳкермешкӗн укҫа-тенкӗ уйӑрать. Хальхи вӑхӑтра павильонсенче «Екатерина», «Золотая Орда», «Ольга» сериалсемпе ӗҫлеҫҫӗ», — сӑмаха малалла тӑсрӗ Валентина. Кинокомпанире вӑл администраторта, ӳкерӳ ӗҫӗн координаторӗнче, режиссер пулӑшаканӗнче тӑрӑшнӑ. Тӗлӗнмелле кӑсӑклӑ тӗнче хӗр чӗрине ҫавӑрса илнӗ. Валентина пуласлӑхне ҫак искусствӑра ҫеҫ курать. Ҫавӑнпах вӑл Дарья Храмцова актрисӑпа кино производствипе ӗҫлеме пуҫланӑ.

